# ЭМИ СЯО

*Китай Халăх Республики*

## ПАЯНТАН МИР ЛАГЕРĔ ТĔРЕКЛĔ

Паянтан мир лагерĕ тĕреклĕ,
Хамăр Хĕвелтухăç шăпине
Алла илтĕмĕр, кам вут тĕртесшĕн-
Ăса кĕртĕпĕр ун йышшине:
Эрешмен карти стена çинчен
Шăлса тăкнă пек çĕр питĕнчен
Шăлса тăкăпăр, пит иртĕнсен.
Эс итле, Япони самурайĕ!
Малашне сан ĕçӳсем начар.
Уолл-стрит сана пит мăнтăрлатрĕ,
Эс ăна юрасшăн суйса пар
Пирĕн туслăхпа союз пирки.
Анчах пĕл: халь самана йĕрки

Урăхла, СССР-па Китай—
Икĕ енлĕ мăлатук вăл халĕ.
Эс кăлар кирек мĕнле ăслай—
Хăвăнах кайран пуçу çухалĕ!

1950